Анисимов В.В. «Поэт хăй сăввине вуларĕ...» : [поэт çинчен аса илни] / В.В. Анисимов // Урал сасси. – 2008. – 24 ака, 1 çу, 8 çу.

Урал сасси

***Пĕр-пĕр юбилей кунĕ е çулĕ çывхарнă май ун çинчен тата нумайрах пĕлес тĕллевпе çĕнĕ материалсемпе паллашни питĕ пысăк тата кирлĕ пулăшу. Тĕрлĕ енче вырнаçса пурăнакан ентешсем те хăйсем мĕн пĕлнине, илтнине вулакансене пĕлтересшĕн. Пушкăрт ял хуçалăх институтĕнче нумай çул математика вĕрентекенĕ пулса ĕçленĕ Вассиан Васильевич Анисимов та К. В. Иванов çинчен хăй мĕн илтнине пĕр çĕре пухса питĕ хаклă материал хатĕрленĕ. Унта унăн ашшĕн В. А. Анисимовăн, амăшĕн Е. Г. Анисимован, унăн пиччĕшĕн В. Г. Ивановăн тата авторăн иккĕмĕш сыпăкри пиччĕшĕн К. Г. Ванюшинăн аса илĕвĕсем кĕнĕ. Хăй астунисем те вырăн тупнă. Кунта сăмах Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн вĕренекенĕ Константин Иванов çинчен пырать. Унсăр пуçне поэт 1911 çулта Ермеккей тăрăхĕнчи Эрехĕрри ялне килнине тĕплĕн асăннă. «Нарспи» произведение çырнăранпа 100 çул çитнĕ май вулакансене çĕннине пĕлме кăсăк пулассăн туйăнать.***

**Вассиан АНИСИМОВ**

# «Поэт хăй сăввине вуларĕ...»

## Эрехĕрри

Хусан кĕпĕрнине кĕрекен Упакасси /халĕ Вăрнар районĕ/ ял каччисем Иванпа Ванюш пан улмипе тата тăварпа суту-илӳ тунă. Хăйсен таварне вĕсем ытларах Пелепейпе Абдуллин тăрăхĕсенче сутнă. Пĕррехинче çапла кунта килсен Ванюш хăйĕн аслă аппăшне Пелепейрен 15 çухрăмра вырнаçнă Этĕл ялне качча парса хăварнă.

Тепĕр çул Ванюш хăй те аппăшĕ ялан ӳкĕтленине итлесе ашшĕ-амăшĕпе калаçса татăлса Этĕл çывăхнелле пурăнма куçма килĕшнĕ. Хăйпе пĕрле, Иван тусне те илсе килес тенĕ. Суту-илӳ вĕçленсен 1809 çулхи кĕркунне япалисене тăватă лавпа тиесе вĕсем çĕнĕ çĕрелле çул тытнă.

1810 çулхине икĕ Иван Эрехĕрри ялне пуçласа пĕрремĕш шалчасем çĕре çапса лартнă. Вара хут пĕлекен, лăпкă-тăнлă Иван Ивановсен йăхне пуçарса янă, хĕрӳ те лара-тăра пĕлмен Ванюшран Ванюшин несĕлĕ йĕркеленнĕ.

Вăрахламасăр Эрехĕрри ялĕ тăрăхра хут пĕлекенсемпе палла тухнă. Унта иртекен уявсене кӳршĕ ялсем курма килсе çӳренĕ.

## Вăл пурнăçа тарăнрах та анлăрах куратчĕ...

**/Чĕмпĕр чăваш шкул выпускникĕ В. А. Анисимов аса илнинчен/**

Василий Анисимович 1889 çулта Чăваш республикинче çуралнă. Тăватă çулта чухне ашшĕне аçа çапса вĕлернĕ. 1903 çулта Чĕмпĕрти учительсене хатĕрлекен шкула пуçламăш пĕлӳ илес тĕллевпе вĕренме кĕнĕ.

— Эпĕ класа кĕрекен алăк енче виççĕмĕш парта хушшинче лараттăм, — тесе пуçлать вăл хăйĕн аса илĕвне. — Пирĕнпе пĕр класра Костя Иванов та вĕренетчĕ. Вăл иккĕмĕш парта хушшинче ларатчĕ. Ыттисенчен хăйĕн тирпейлĕхĕпе тата тăрăшулăхĕпе уйрăлса тăратчĕ. Çийĕ-пуçĕ те ялан таса та килĕшӳллĕччĕ. Пурăна киле пĕлӳ-вĕренӳ енчен пиртен нумай мала кайрĕ. Çавна пула сумĕ те ӳсрĕ. Вăл литература урокĕсене ыттисенчен ытларах юратни кашни кун туйăнса тăратчĕ. Вырăс классикĕсен Пушкинăн, Лермонтовăн, Некрасовăн сăввисене, пысăк произведенийĕсене пĕр пăхмасăр вулама пултаратчĕ. Некрасова ыттисенчен те ытларах килĕштеретчĕ. Вăл хура халăх нушине ăнланни çапла туйăм çурататчĕ пулас. Хăй те каласа панă чухне итлесе тăранмалла марччĕ. Вăл инçерех те тарăнрах курма пĕлни пире ун патне илĕртетчĕ-тĕр.

Икĕ çул вĕреннĕ хыççăн тĕп класа куçарчĕç. Унта вара эпир Костьăпа пĕр парта хушшине лекрĕмĕр. Ман пата вăл хăй куçса ларчĕ. Пĕррехинче Атăл çыранĕ çинче ларакан Костя эпĕ пĕр туса чышкăран хăтарса хăварнине курнă иккен. Начартарах сывлăхлă гимназиста аслăраххисем тапăнсан эпĕ ăна хăтăлма пулăшнăччĕ. Ялан çыран хĕрринче уçăлса çӳрекен, кунти илеме ӳкерме юратакан Костя çавăн чухне мана асăрханă та туслашма шутланă. Унăн ӳкерчĕкĕсем чĕрĕ пек, çав тери хитре пулатчĕç, йывăçран эрешсем те ăста касса кăларатчĕ. Çак таланчĕ ăна пĕррехинче хĕнлĕхе кĕртсе ӳкерчĕ. 1905 çулхи пĕрремĕш революци шавĕ пирĕн гимназие те çитрĕ. Йĕри-тавра пухусемпе митингсем кĕрлерĕç, тăшманпа çапăçмалли, кĕрешмелли тĕрлĕ чĕнӳсем янăрарĕç. Костя хресченсемпе рабочисене хăйне майлă пулăшас тесе пуль буржуйсемпе, власть умĕнчи çынсем çинчен кулăшла карикатурăсем ӳкерчĕ. Унăн кăранташĕ айне Турă законĕсене вĕрентекен учитель те лекнĕччĕ. Çавна пула ăна шкултан кăларса ямалла турĕç. И. Я. Яковлев хутне кĕни те пулăшмарĕ, каялла тавăрмарĕç. Çак кăмăлсăр пулăм 1907 çулхи пуш уйăхĕнче пулса иртрĕ.

Тепĕр виçĕ çултан тин, 1910 çулхи çуркунне, Костя Чĕмпĕре таврăнчĕ. Ку хутĕнче ăслă-тăнлă тата ĕçчен алăллă пулни ăна хăй вĕреннĕ шкул çумĕнчи училищĕне чистописанипе рисовани учителĕ пулса вырнаçма пулăшрĕ. Çак çулсенче вăл куçаруçă ĕçĕнче ăнăçлă тăрăшрĕ, чăваш халăхĕн ĕлĕкрен килекен сăмахлăх пуянлăхне пухрĕ. Костя чăннипе те пирĕншĕн чăн-чăн тĕслĕхчĕ, урăхла каласан — ертӳçĕ.

Вăл вăхăтра ун çумĕнче эпир пурте юратакан, сумлакан И. Я. Яковлев пулни те пысăк пĕлтерĕшлĕччĕ. Вĕрентекен тăрăшнипе Костя ăсне анлăлатса тата тарăнлатсах пычĕ, произведенийĕсене пичетлеме пултарчĕ.

1913 çулта Чĕмпĕрти шкултан вĕренсе тухсан манăн çулăм Пелепей тăрăхне пулчĕ. Унтан мана Енкрел /Больше-Зингиреево/ ялне ĕçлеме ячĕç. Çав çулах эпир Елена Гавриловнăпа мăшăрлантăмăр. Малтанлăха шкул çуртĕнче пурăнтăмăр.

Çуркунне енне, пушăн 15-мĕшĕнче /кивĕ стильпе/ манпа пĕр класра вĕреннĕ Константин Иванов вилни çинчен илтрĕм. Тепĕр икĕ кунран мăшăрпа иксĕмĕр ун вил тăпри çинче пултăмăр.

## Елена Гавриловна Анисимова аса илĕвĕсем

Шкула вĕренме çӳричченех атте, Г. С. Иванов, мана вулама, çырма тата вырăсла калаçма вĕрентнĕччĕ. Вĕренĕве çапла малтанах хатĕр пулни кайран та çăмăллăх парса пычĕ. Çавна пула Кăратмас шкулне эпĕ Мухтав хучĕпе вĕçлерĕм.

1908 çулта атте тăрăшнипе эпĕ Чĕмпĕрти учительсене хатĕрлекен шкула кайса лекрĕм. Вăл вăхăтра çак учреждени Пелепей уесĕн ачисем валли вĕренĕве малалла тăсмалли пĕртен-пĕр вырăнччĕ. Унта çав тери тăрăшса вĕрентĕм. Çавăнтах К. Ивановпа тата хамăн пулас мăшăрпа В. Анисимовпа паллашрăм.

Константин чăннипе те пиртен нумай ырă енĕпе уйрăлса тăратчĕ. Кунта унăн тарăн пĕлĕвне те, тирпейĕпе тăрăшулăхне те асăнса пулать. Эпир ăна вырăсла евĕр Костя тесе чĕнеттĕмĕр. Унран тапса тăракан ăшă пирĕншĕн пысăк туртăмччĕ. Унпа юнашар хăвна ăслă та вăйлă туяттăн. Мĕншĕн тесен вăл хăш вăхăтра та сана пулăшма хатĕррине пĕлеттĕн. Унăн витĕр пăхакан куçĕсем ăшăпа çупăрланăн туйăнатчĕç. Костя çумĕнче начартарах курăнас килместчĕ. Тавракурăма ӳстерме пире хăй те пулăшатчĕ. Ялан кĕнекесем тупса паратчĕ, вулама хистесех тăратчĕ. Килтисем çинчен ыйтса пĕлетчĕ, çыхăну тытнипе кăсăкланатчĕ.

***/Малалли пулать/.***

***Г. ДАНИЛОВА хатĕрленĕ.***

## Урал сасси

*/Малалли. Пуçл. иртнĕ номерте/.*

1911 çулхи çĕртме уйăхĕнче Костя Эрехĕррине килчĕ. Кĕркунне хыççăн эпĕ тек Чĕмпĕрти пансионата каяймарăм. Манăн вырăна, Костя пулăшнипе, унăн йăмăкĕ Мария йышăннăччĕ. Эпĕ вара вĕренĕве пăрахрăм. Чĕрере йывăр туйăм тахçанччен сыхланса тăчĕ пулин те, хамăр паллă, пултаруллă поэтăмăра юратма нихăçан та пăрахман эпĕ. Чăваш халăхĕшĕн тунă ĕçĕшĕн пуçăма таятăп.

## Ака туйĕн чи хисеплĕ хăни

**/Елена Гавриловнан пиччĕшĕн В. Г. Ивановăн аса илĕвĕсенчен/**

Эпĕ Гавриил Семеновичăн аслă ывăлĕ пулнă май пур пек вăйпа хăвата атте-аннен хуçалăхне параттăм. Турă мана патвар та çуллĕ пÿ, паттăр та вăрăм урасем панă. Çавăнпа ачаранах сикме, чупма юрататтăм. Тус-юлташсем хушшинче мана çитекен çукчĕ. Кăшт ÿссен вара хамăн пултарулăха ака туйисенче кăтартма пуçларăм. Унта та хама çĕнтерекенсене пулман.

***Вассиан АНИСИМОВ***

# «Поэт хăй сăввине вуларĕ...»

Слакпуç ялĕнчи 1911 çулхи ака туя хутшăнтăм. Çĕнтерÿçĕ ятне илнĕ хыççăн черетлĕ парнене мана Константин Иванов майăран çакса ячĕ. Ман пата пырсан вăл:

— Васили! Чĕмпĕрте сирĕн ялтан Лена ятлă хĕр вĕренет. Санăн тăвану мар-и? — тесе ыйтрĕ.

— Манăн йăмăк вăл, — хуравларăм эпĕ.

— Ăна манран салам кала. Сана çĕнтерÿçĕ ячĕпе саламлатăп. Пĕлтĕр те эсех çĕнтернĕ теççĕ. Маттур! — терĕ вăл.

Ун хыççăн эпĕ ăна хамăн парнене парнелерĕм. Пирĕн ялта иртекен уява чĕнтĕм. Ăна шăп та лăп Çимĕк кунне палăртнăччĕ. Костя мана килме сăмах пачĕ. Унтан вара унпа уйрăлтăмăр.

Хăйĕн сăмахне тытрĕ вăл. Кăнтăрла хыççăн юланутпа килсе çитрĕ. Эпир ăна йăмăкпа иксĕмĕр хапаха патне тухса кĕтсе илтĕмĕр. Вăл лаши çинчен ансанах Лена: «Костя! Мĕнле тумланнă вара эсĕ? — тесе кăшкăрса ячĕ.

Пирĕн хăна хĕрелсе кайса пуçне усрĕ. Тăхăнма вăл чăннипе те чухăн тăхăннăччĕ. Пуçĕ çинче кивĕ карттус, çийĕнче хура саттин пиншак. Ун айĕнчен хĕрлĕ пир кĕпе курăнать. Йĕмĕ те йĕрлĕ-йĕрлĕ хĕрлĕ пиртен. Урине шурă тăла чăлха тăхăнса çăпата сырнă. Çавăн пек паллă çын тесе калаймăн, ял ачисенчен нимĕнпе те уйрăлса тăмасть. Лена сăмахĕсем хыççăн хăйне алла илнĕ Костя: «Ятарласа ял ачилле тăхăнтăм. Уйрăлса тăрас килмест. Эсир те эпĕ кам иккенне çынсене ан калăр», — терĕ.

Унтан пÿрте кĕтĕмĕр. Хаклă хăна мана хăйĕн «Нарспи» поэмин кĕнекине парнелерĕ. Унта вăл «Ака туйисен паттăрне Константин Ивановран. 1911 çулхи çĕртме» тесе çырчĕ. Сас паллисем шăрçа пек тикĕс те илемлĕ пулчĕç. Манăн йăмăка та вăл тимлĕхсĕр хăвармарĕ. Ăна хăй йывăçран ăсталаса, касса илемлетнĕ пенал парнелерĕ. Вăл икĕ хутлăччĕ, çине кĕл тĕслĕ туса çутатнăччĕ.

Хĕвел аннă хыççăн ял çамрăкĕсем урамсем тăрăх пĕр-пĕрин хыççăн утса Пăтă кусĕ тăвĕ çине пухăнчĕç. Тăвăн ячĕ çĕр айĕнчен палкаса вĕресе тăкăнас пăтă евĕр тухакан çăлран кайнă. Кас шăплăхне янравлă юрă пăсрĕ. Юрă хыççăн ташă ылмашса пычĕ. Çав хушăра çамрăксем хушшинчен ман йăмăкăм тухрĕ те: «Пирĕн уява Слакпуçĕнчен Константин Васильевич Иванов килнĕ. Хăйĕн «Нарспи» поэмине вуласа пама ыйтатпăр-и?» — терĕ пурте илтмелле.

Пурте алă çупса ячĕç. Костьăна вăйă картин варринелле туртса кăлартăм. Вăрттăнлăхĕ уçăлнă поэт çухалса кайрĕ. Савăннине шавлăн алă çупса кăтартакан çамрăксем часах шăпланчĕç. Тÿпери шупка уйăх çути унăн питне кăшт çутатрĕ. Çамрăксем хушшинче тăракан каччă хăйĕн вилĕмсĕр произведенин пĕрремĕш йĕркисене кала пуçларĕ... Итлекенсем пĕр сасă кăларма хăймасăр, сывламасăр тенĕ пек тăчĕç. Карланкăра тем амакĕ хытса ларчĕ. Çĕтас тесен те антарса ярса пулмасть. Хĕрсем хушшинче йĕпеннĕ куçĕсене шăлакансем те курăнчĕç. Акă юлашки йĕркесене вуларĕ те поэт, вĕçленнине пĕлтерсе пуçне тайрĕ. Тăнă вырăнне таврăнас тесе тапрансан ăна каччăсем аллисем çине йăтса вăрман уçланки еннелле çул тытрĕç.

Вăрахламасăр тĕнчене кун çути çапа пуçларĕ. Килĕсене саланас умĕн çамрăксем хурăн турачĕсенчен Çимĕк мунчи валли милĕксем турĕç. Эре шывĕ хĕррипе вырнаçса тухнă мунчасене васкарĕç. Эпир те Костьăпа мунчара çăвăнтăмăр, шывра та ишсе килентĕмĕр.

Ялти ака туй чиркÿ служби хыççăн пуçланчĕ. Ĕнтĕ тин пытанма май çуккине ăнланнă тусăм ку хутĕнче çынсен умне çăмăллăн тухрĕ. Çав хушăра та пулмарĕ ун майĕнчен пĕр суккăр вата хĕрарăм уртăнчĕ: «Ывăлăм! Санăн Нарспийу вĕт эпĕ», — тесе ĕсĕклесе ячĕ. Çак çынна ашшĕ-амăшĕ ирĕксĕр ватă пуяна качча панă пулнă. Çавна курас мар тесе вăл куçĕсене тĕртсе шăтарнă.

Кĕçех ăмăртусем пуçланчĕç. Шеп те правур çамрăксем пĕрин хыççăн тепри парнесене тивĕçрĕç. Эпĕ те сикессипе çĕнтерÿçĕ пултăм. Парне туса панă пит шăллие Константин хулĕ çинчен уртса ятăм. Мана курса ыттисем те хăйсен парнисене асăнмалăх поэта пачĕç.

Уяв вĕçленчĕ. Ют ялсенчен килнисем кайса пĕтрĕç. Пирĕн хаклă хăна та килне пуçтарăнчĕ. Каччăсем часах уйрăлас килменрен унпа тахçанччен юнашар пырса калаçса тăчĕç. Ял халăхĕ те хапхисем умĕнче ырă сăмахсемпе тав туса, çитĕнÿсем сунса ăсатрĕ.

— Чипер кай! Пире ан ман, килсех çÿре. Сывлăхлă пул, — терĕç вĕсем.

Çулсем иртрĕç. Пирĕн ял пĕтĕм çĕршывпа пĕр тан империалист тата граждан вăрçисем, 1921-1922 çулсенчи выçлăх витĕр тухрĕ. Тата 1922 çулта ял пĕтĕмпе çунса тĕпленни те пулчĕ. Вутти манăн атте çурчĕпе урам урлă пурăнакан Дмитрий Ванюшин килĕнчен тухнăран çулăмĕ часах пирĕн хуралтăсем çине сиксе ÿкнĕ. Эпĕ вăл вăхăтра хирте сĕлĕ çулнă çĕрте ĕçлеттĕм. Чупса килсе çитнĕ çĕре çунман вырăн та çукчĕ. Ниме пăхмасăр çулăм ăшне чăмса арчана хăтарса хăвартăм. Унта манăн парнесем хушшинче К. Иванов хăй аллипе парнеленĕ «Нарспи» поэмăн кĕнеки те пурччĕ. Çапла çак хаклă парнене эпĕ ун чухне вутран сыхласа хăвартăм.

## Поэт амăшĕ патĕнче хăнара

**/1912 çулта çуралнă К. Г. Ванюшинăн аса илĕвĕсем/**

1925 çулта эпĕ Ĕпхÿри чăваш педагогика техникумне вĕренме кĕрес терĕм. Анчах ĕмĕтленни кăлăхах пулчĕ. Киле таврăнас шухăшпа чукун çул вокзалнелле çул тытрăм. Унта çитсенех Константин Ивановăн кĕçĕн шăллĕне, Петĕре, тĕл пултăм. Эпĕ ыйтнипе вăл Глуховской станци таран икĕ билет илчĕ те поезда кĕрсе лартăмăр. Петĕр станцие çитсен анчĕ те тÿрĕ çулпа ялнелле утрĕ. Манăн тата малалла каймалла пулнăран Аксаково таран билет илес тесе касса тĕлне пытăм. Поезд тек пулманран манăн вокзалта çĕр касмалла пулчĕ. Ирхине ирех Петĕр ялне, Слакпуçне, кайса курас терĕм.

*/Вĕçĕ пулать/.*

***Г. ДАНИЛОВА хатĕрленĕ.***

Урал сасси

*/Вĕçĕ. Пуçл. 17-18 №№/.*

Ивановсен чултан купаланă пысăк та хăтлă çурчĕ ял варринче вырнаçнă. Мана вĕсен амăшĕ питĕ тараватă кĕтсе илчĕ. Тутлă кукăльпе вĕри чей ĕçтерчĕ. Ĕнертенпе апат лекменскер эпĕ кукăле питĕ юратса çирĕм. Манпа пĕрле Петĕр те апат хыпкаларĕ.

Сĕтел хушшинче ларнă май куç тĕлне сăрпа сăрласа ӳкернĕ икĕ портрет лекрĕ. Вĕсем хирĕçле стенасем çинче пĕр-пĕрин çине пăхаççĕ. Хĕрарăм сăнĕнче эпĕ кил хуçи арăмне палласа илтĕм.

— Ку сăнсене пирĕн Кĕçтук ӳкернĕ. Лешĕ, ав, унăн ашшĕ. Ку — эпĕ, — терĕ вăл аллисемпе тĕллесе. «Атте, анне! Акă сире манран парне. Тек çапла пĕр-пĕрин çине пăхса ларăр. Кичем пулмасть», — терĕ ывăл вĕсене çакса хунă май. Çавăнтанпа хускатман... Кĕçтук юлашки çулĕсенче йывăр чирлерĕ. Çанталăк пăсăлнă кунсенче питĕрех тарăхатчĕ. Анчах нихăçан та макрашса тарăхтарман. Кăмăллă пулма тăрăшатчĕ. Çулла хĕвел çинче ăшăнса киленме, уçланкăсемпе хирсенче уçăлса çӳреме, вăрманта пулма юрататчĕ. Çавăнтан

## «Поэт хăй сăввине вуларĕ...»

**Вассиан АНИСИМОВ**

вара ялан ӳкерчĕксемпе килетчĕ е урăх ĕç тăватчĕ. Кĕçтукăн аллисем ылтăнччĕ. Йывăçпа ĕçлеме те çав тери кăмăллатчĕ».

Хăна пулса каннă, апат çинĕ хыççĕн эпĕ каллех станцине çул тытрăм. Ара, киле çитмелле-çке. Ырă кăмăллă хĕрарăмпа поэтăн шăллĕ мана тухсах ăсатса ячĕç.

## Ял клубĕн сцени çинче

Ку ĕçсем вăтăрмĕш çулсенче пулса иртрĕç. Ваçили пичче вутран хăтарса хăварнă кĕнеке темле майпа пĕччен пурăнакан хĕрарăм аллине лекнĕ. Эпир, ача-пăчасем, Ульяна аппа патне пухăнса ăна вуланине итлеме юрататтăмăр. Ун тавра пухăнса ларattăмăр та шăппăн тимлеттĕмĕр. Вăрах та вăхăт иртмесĕр пурте пăхмасăр калама вĕрентĕмĕр. Ульяна аппана каласа параттăмăр. Ыттисем пекех вăл кĕнекене эпĕ те пĕрре мар алăра тытнă.

Кĕнеки хăтăлса юлнă пулсан, пеналĕ пĕтрĕ вара. Иккĕмĕш класа куçсан мухтанас ĕмĕтпе эпĕ ăна шкула илсе кайрăм. Сумкаран кăларнăччĕ кăна, ачасем туртса та илчĕç. Пĕринчен тепри тăлпаланипе хайхи çĕмĕрĕлчĕ. Петĕр пичче çыпăçтарас тесе те тăрăшрĕ, усси пулмарĕ. Татăкĕсем çӳлĕк çинче чылайччен выртса çӳренĕ хыççăн таçта çĕтрĕç...

Кĕнекин ĕмĕрĕ вăрăм пулчĕ. Каярах та ăна çынсем хумханса та савăнса вулани пĕрре мар пулнă.

1924 çулсенче Петр Гаврилович Иванов ялта драма кружокне йĕркелерĕ. «Нарспи» произведение сцена çинче лартма ĕмĕтленетчĕ. Унтан спектакльти рольсене вылякансене шырама пуçларĕ. Çакă пирĕн ял историнче пĕрремĕш представлени пулчĕ.

Хатĕрленес ĕç-пуç лайăх пуçланчĕ. Анчах кăшт вăхăт иртсен Нарспи рольне выляма килĕшнĕ Петĕрĕн иккĕмĕш сыпăкри йăмăкĕ, Кăратмасри Елена, репетицисене урăх çӳремессине пĕлтерчĕ. Вара çак роле йăрăс пӳллĕ, уçă сасăллă, çав тери илемлĕ сăнлă Зарянново хутор хĕрне Мария Петровна Иванована шанса пачĕç. Елена Викторовна хăй качча кайнă чухнехи кĕпине, пĕркенчĕкне, тенкĕсемпе тата вĕтĕ шăрçапа илемлетнĕ хушпуне пачĕ. «Тăхтамана» пуянла тăхăнтартас тесе Ленăн аслă пиччĕшĕ Михаил ятарласа тилĕ тытрĕ, тирне сӳсе илчĕ. Унтан вара калпак çĕлерĕç.

Репетицисем вăрах пычĕç. Текстне те тĕрĕслес, тикĕслес ĕç чарăнса тăмарĕ. Витĕмлĕрех те тĕрĕсрех кăтартас килчĕ «артистсен» автор шухăшĕсене. Выляканĕсем пурте хăйсен роль сăмахĕсене пăхмасăр калама вĕренсе çитрĕç. Пĕрре çапла çак ĕçе Иосиф Муромцев пачăшкă хутшăнчĕ. Вăл пирĕн пата килчĕ те: «Петĕр, кун пек юрамасть. Нарспие венчете тăратмасăр качча паратăн-им?» — терĕ.

— Чиркĕве илсе каясшăн-им? — тĕлĕнтĕм эпĕ.

— Çук. Çцена çинче, — терĕ вăл.

— Унта вĕт-ха пачăшкă ролĕ çук.

— Хушса хур та, ĕçĕ пĕтрĕ!

— Юрĕ. Эпĕ «артистсемпе» калаççа пăхăп, — терĕ Петĕр унпа килĕшсе. Спектакльте вылякансене те ку шухăш килĕшрĕ.

## Венчетри Нарспи

Хĕлĕн пĕр каçĕнче ялта пĕрремĕш представлени пулчĕ. Спектаклĕн чи илемлĕ те пĕлтерĕшлĕ вырăнĕ — туй. Виçĕ шур сухаллă ватă шăпăр каласа «туй халăхне» ташлаттарчĕç. Çав тери ăнăçлă иртрĕç, шанса панă рольсене пурте лайăх вылярĕç. Курма килекенсем спектакльте чăн-чăн пачăшкă пулнинчен калама çук тĕлĕнчĕç. Ун хыççăн тата тепĕр икĕ хут кăтартмалла пулчĕ.

«Нарспие» тăваттăмăш хут та венчете тăма тӳр килчĕ. Спектакль хыççăн тепĕр çултан хĕр хăйĕн «Сетнерне» — Григорий Зарянова — чăннипе качча тухрĕ. Чиркӳре вĕсене каллех çав пачăшкă венчет турĕ. Хĕр пĕр аллинче çурта тытрĕ пулсан, тепринпе хăй çумне «Нарспи» поэма кĕнекине чăмăртаса тăчĕ. Çакă уншăн Турăран каçару ыйтнăн туйăнчĕ. Ара, вăл çак пехиле тăваттăмĕш хут илтет-çке.

Çакă ялшăн та таврашăн та тахçанччен асра тытмалли пулăм пулчĕ. Çунса кĕлленнĕ çуртсем вырăнне çĕннисем хăпарса ларчĕç. Пурăна киле пурнăç йĕркене кĕчĕ.

Ял Канаш председателĕ Георгий Ивановпа Сергей Крюков, Иванов Петĕрпе Иосиф Муромцев К. В. Иванов Эрехĕрринче пулнă факта çитĕнекен ăрусемшĕн сыхласа хăварас тесе ту çинчи «Пăтă куçĕ» çăла çветит туса кашни Çимĕк кунĕ кунта служба йĕркелес тесе йышăнчĕç. Ку вырăна таçтан курăнса ларакан хĕрес лартма палăртрĕç. Çапла вара 1929 çулхине таврари ялсенчен те çынсем пухăнса пĕрремĕш служба иртрĕ. Йăлана тытса пырасси тăвата çула тăсăлчĕ.

Инкекĕ пĕр кĕтмен çĕртен сиксе тухрĕ. 1930 çулта приход пачăшкине Иосиф Муромцева çуртĕнчен кăларса ячĕç. Ăна урăх вырăна куçарса лартса унта шкул уçрĕç. Çав çулхи кăрлач уйăхĕнче вырăнти ял Канаш председательне улăштарчĕç. Ертӳçĕ ĕçне Сергей Крюков, секретарĕнне Петр Иванов тытăнчĕç. 1933 çулта чиркĕве хупрĕç, И. Муромцева арестлесе Пелепей тĕрмине лартрĕç. Унтан тухсан вăрах та тăмасăр ăна тепĕр хут арестленĕ, кайран лагере ăсатнă терĕç.

Спектакльте суфлер пулнă çамрăк учительницăна «политикăна ăнланса çитейменшĕн» ĕçĕнчен кăларчĕç. 1937 çулта кружок йĕркеленĕ тата «Нарспи» спектакле лартнă Петр Гаврилович Иванова арестлерĕç. Ăна ку ĕçе чăн-чăн пачăшкăна хутшăнтарнă, чиркĕве хупма кансĕрленĕ тесе айпларĕç. Вара ГУЛАГ лагерьне ăсатрĕç. 1941 çулта яла вăл вилни çинчен хыпар çитрĕ. 1954 çулхи реабилитаци ăна айăплисен шутĕнчен хăтарчĕ.

Сергей Крюковран та саккун алли пăрăнса иртмерĕ. Этĕл вăтам шкулĕнче директорта ĕçлекенскере 58-мĕш статьяпа политикăллă суккăрлăхшăн айăпласа Çĕпĕре ăсатрĕç. Вăл унта нимĕç самолечĕсем çинчен ӳкекен бомбăсем айне пулса 1941 çулта вилнĕ. Марияпа Григорий мăшăр хăйсемпе мĕн пулассине лайăх пĕлсе Тутарстана тарса хăтăлса юлчĕç. Ту çинче таçтан курăнса ларакан хĕресе 1934 çулта влаççем çунтарса тĕплерĕç.

Çапла вара «Нарспипе» çыхăннă ырă та, хурлăх та нумай пулчĕ ял çийĕнче. Ниме пăхмасăр эпир Константин Ивановпа унăн произведенине юратма, сумлама пăрахмастпăр. Халăх чĕринче вăл ĕмĕр упранĕ.

***Г. ДАНИЛОВА хатĕрленĕ.***